26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
8
ВЫРСАРНИКУН
158(6395) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Нимĕçсен Орел таврашĕнчи плацдармне пĕтерсе лартни тата совет войскисем Орелпа Белгород хулисене тытса илни

Брянск фрончĕн войскисем, Хĕвеланăç тата Центральнăй фронтсен войскисем флангсенчен пулăшса тăнипе, наступлениллĕ вăйлă çапăçусем туса пырса, Германи командованийĕ Орел районне пухса тăратнă нимĕç çарĕн суйласа илнĕ чаçĕсене çапса аркатрĕç, тăшманăн Орел таврашĕнчи плацдармне пĕтерсе тăкса, августăн 5-мĕшĕнче Орел хулине, икĕ çул хушши яхăн нимĕç оккупанчĕсен аллинче пулнăскере, йышăнса илчĕç. Çав кунах, августăн 5-мĕшĕнче, Çеçенхир тата Воронеж фрончĕсен войскисем, тăшманăн фронтне татса кĕрсе, Белгород хулине тытса илчĕç.

Хĕрлĕ Çар Верховный Главнокомандовани планĕ тăрăх питех те чаплăн пурнăçа кĕртнĕ çав пĕтĕм операци икĕ тапхăра уйăралать:

1. Нимĕçсен фашистла войскисем Курск кукăрĕнче вырнаçса тăракан совет войскисене çавăрса илсе пĕтерсе тăкас тата Курск хулине йышăнса илес шутпа кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕнче Орелпа Курск тата Белгородпа Курск еннелле пуçласа янă çуллахи наступленине пирĕн войскăсем ăнăçлăн пĕтерсе лартни.

2. Хĕрлĕ Çар Орелпа Белгород хулисем еннелле ăнăçлăн наступлени туса пыни, çав наступлени тăшманăн Орелпа Белгород таврашĕнчи группировкисем поражени тӳснипе тата пирĕн войскăсем Орелпа Белгород хулисене йышăнса илнипе вĕçленни.

Çапăçусен пĕрремĕш тапхăрĕ

Нимĕçсен Орелпа Курск тата Белгород енĕсенчи наступленийĕ путланса ларни

Июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем, нумай йышлă авиаци пулăшса тăнипе, Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче наступлени пуçласа янă. Унччен малтан Гитлер приказ кăларнă пулнă. Çав приказра çапла каланă: «Германи çарĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче генеральнăй наступлени пуçласа ярать, нимĕç войскисем пырса çапни татса паракан вырăн йышăнма тата вăрçăра çавăрăну пункчĕ пулса тăма тивĕçлĕ, çакă вара Германи çĕнтерĕвĕшĕн юлашки çапăçу пулса тăрать», тенĕ.

Нимĕç çак «татăклă наступленине» пуçласа ярса, çын вăйĕсемпе техникăпа, орудисемпе самолетсене çав тери нумай расходласа пĕтерсе, оперативлă ситĕнӳсене кăна мар, тактика тĕлĕшĕнчен те ситĕнӳсем тăваймарĕ. Кунтан та ытларах, пирĕн войскăсем, тăшманăн наступлени кĕртсе янă дивизийĕсене аркатса, халсăрлатса пĕтерсе, тăшманăн наступлени тăракан çарне хирĕçле хăватлăн пырса çапрĕç. Орелпа Курск енче кĕрешекен совет войскисем июлĕн 17-мĕшĕ тĕлне нимĕçсен наступлени пуçласа яричен, урăхла каласан, 1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕччен, хăйсем йышăнса тăнă вырăна пĕтĕмĕшпех каялла тавăрчĕç. Белгород енче кĕрешекен совет войскисем, контрнаступлени вăйлатса пырса, июлĕн 23-мĕшĕ тĕлне нимĕçсен наступлени пуçласа яричен, урăхла каласан 1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕччен, хăйсем йышăнса тăнă рубежсем патне тухрĕç.

Çав вара, нимĕç войскисен çуллахи наступленийĕ, гитлеровецсен пысăк шанчăк хывнăскер, путланса ларчĕ. Гитлеровецсен—çуллахи вăхăт нимĕç çарĕн ситĕнӳсене сĕнтерӳсем тăвакан сезон пулса тăрать тесе, совет войскисем вара çуллахи вăхăтра кĕрешекен кăна хатĕр тесе калаçнă юмаха Хĕрлĕ Çар сирсе пăрахрĕ.

Курск плацдармне тытса илме, çапла вара Орел плацдармĕнчен Мускав çине наступлени тумалли условисем хатĕрлеме ăнăçсăр хăтланса, нимĕçсен фашистла войскисем, июлĕн 5-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинче, 2900 танк, 1039 оруди, вĕсенчен хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 195 оруди, 1392 самолет, 5000 автомашина ытла тата, вилнисене кăна шутласан та, 70.000 салтакпа офицер ытла çухатрĕç.

Гитлеровецсен черетлĕ авантюри çапла пĕтсе ларчĕ.

Çапăçусен иккĕмĕш тапхăрĕ

Совет войскисем Орелпа Белгород енĕсенче ăнăçлăн наступлени туса пыни

Совет войскисем нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе лартрĕç кăна мар, çакăнпа пĕрлех вĕсем тăшман войскисен Орел кукăрĕнче тата Белгород районĕнче вырнаçса тăракан группировкисене хирĕç татăклă наступлени пуçласа ячĕç, нимĕçсене йывăр поражени тӳстерчĕç.

Нимĕç командованийĕ Орел хулине çав тери пысăк вырăна хунă. Гитлерла генералсем Орела нимĕç войскисен Мускав çине наступлени тумалли плацдарм вырăнне хунă, çав вăхăтрах тата нимĕç оборонин фронтăн вăтаçĕр участокĕнчи бастионĕ вырăнне хунă.

Орел хулине 22 уйăх хушши тăрса, нимĕçсем Орел районĕнче çирĕплетнĕ хăватлă район туса хунă. Вĕсем кунта нумай йышлă юханшыв рубежĕсем çинче тĕрекленсе тăракан оборона сооруженийĕсем нумай вăхăтра тата тĕплĕн тунă. Çак кунсенче кăна-ха нимĕç печачĕ Орела Германи оборонин çирĕп пулни çинчен çырнă.

Орелран çурçĕртерехре, хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăрахра вырнаçса тăракан совет войскисем июлĕн 12-мĕшĕнче пĕр еннелле—Орел еннелле татăклă наступлени пуçласа ячĕç. Нимĕç командованийĕ—Орел кукăрĕнче хӳтĕлесе тăракан нимĕç войскисене пĕр утăм та каялла чакмалла мар, юлашки салтак юличчен çапăçмалла, тесе приказ панă. Орел районне Германи пулăшу татти-сыпсăр кĕрсе тăнă, войскăсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтăн ытти участокĕсенчен пĕтĕм васкавлăн куçарса илнĕ.

Верховный Главнокомандующи приказне пурнăçа кĕртсе пырса, Хĕрлĕ Çар, вăйлă çăмăрсем çунине тата çулсем пăсăлнине пăхмасăрах, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, пĕр чарăнмасăр малалла куçса пычĕ, нимĕçсен оборона линине пĕтĕм вăйлăн татса кĕчĕ те августăн 5-мĕшĕнче, урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн, Орел хулине йышăнса илчĕ.

Белгород енче пирĕн войскисем августăн 4-мĕшĕнче наступлени пуçласа ячĕç, тăшман оборонине татса кĕчĕç те, нимĕçсене поражени тӳстерсе, Белгород хулине йышăнса илчĕç.

Пирĕн войскăсем июлĕн 24-мĕшĕпе августăн 6-мĕшĕ хушшинче Орел еннелле çапăçса пырса тата августăн 4-мĕшĕпе 6-мĕшĕ хушшинче Белгород еннелле çапăçса пырса тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 50.000 çын ытла, 1.705 танк, пур тĕрлĕ калибрлă 584 оруди, 6.000 автомашина пĕтерсе тăкрĕç.

Пĕтĕмпе Орелпа Белгород енĕсенчи пĕр уйăх хушшинчи çапăçусенче, июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа августăн 6-мĕшĕ çитичченех, Хĕрлĕ Çар тăшмана çакăн пек çухатусем тӳстерчĕ: тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене—120.000 çынна вĕлернĕ, 4605 танк, 1623 оруди, 11.000 автомашина персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, 2492 самолет персе ӳкернĕ.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем 521 танк, тĕрлĕ калибрлă—875 оруди (вăл шутра хăйсем тĕллĕн куçса çӳрекен орудисем те кĕреççĕ), 2521 пулемет, 325 тĕрлĕ склад тытса илнĕ. Нимĕçсен 12.418 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар, Верховный Главнокомандовани планне пурнăçа кĕртсе пырса, пĕр уйăх хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен Курск çине наступленине путлантарнă çеç мар, нимĕçсен çуллахи группировкисене пысăк поражени тӳстерчĕ, тăшманăн Орел таврашĕнчи плацдармне пĕтерсе лартрĕ тата Орелпа Белгород хулисене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕ.

Нимĕçсен çуллахи наступленийĕ путланса ларни тата нимĕç войскисен Орелпа Белгород патĕнче поражени тӳсни çакăн çинчен калаççĕ: Хĕрлĕ Çар çуллахи условисенче хăйĕн наступленийĕн ситĕнӳсене çирĕплетсе хăварма кăна мар, çавăн пекех тата малалла вăйлантарса яма пултарчĕ.

Халĕ ĕнтĕ нимĕçсем вĕсен хĕрешисем çуллахи условисенче вăрçă ĕçĕсенче ăнăçлă пулма тесе шанса тăнисем тĕпĕпех пĕтрĕç.

Çапла ĕнтĕ нимĕçсен юмахне—совет войскисем çуллахи вăхăтра ăнăçлă наступлени тума пултараймаççĕ тесе калакан юмаха тĕрĕс мар тесе кăтартрĕ.

Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлă çапăçăвĕсем Гитлер çарĕн мĕнпур тĕп вăйĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çыхлантарса лартрĕç, нимĕç командованине хăйсен войскисемпе ирĕклĕ маневрсем тума май памарĕç, çапла вара пирĕн союзникĕсен валли Европа континенчĕ çинче активлă наступлениллĕ вăрçă ĕçĕсем сарса яма тата ытларах мелсемпе лайăх условисем туса пачĕç.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи çуллахи çапăçусен пĕр уйăхри итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Халăха çутта кăларас ыйтупа пулса иртнĕ Пĕтĕм Российăри канашлу

Августăн 5-мĕшĕнче Мускавра халăха çутта кăларас ыйтупа пухнă Пĕтĕм Российăри канашлу хăйĕн ĕçĕсене пĕтерчĕ. Канашлу шкулсен отечественнăй вăрçă условийĕсенче туса ирттерекен ĕçне пăхса тухнă тата çитес вĕренӳ çулĕ умĕн учительсем умĕнче тăракан задачăсене палăртса хунă. Канашлăва Автономлă республикăсенчи Çутĕç халăх комиссариачĕсемпе, крайсенчи облаçсенчи çутĕç отделĕсен руководителĕсем, шкулсен директорĕсем тата учительсем пулнă.

РСФСР Çутĕç халăх комиссарĕ В. П. Потемкин юлташ хăйĕн докладĕнче çакна палăртнă: совет шкулĕ, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем пулнине пăхмасăр, пĕр пулми те хăйĕн задачине пурнăçласа пырать. Вăрçă пуçланнăранпа шкулсем шучĕ чакман çеç мар, вăл ӳснĕ, çĕнĕрен 1.400 шкул уçнă. Кăçал шкулсем тума тата юсама 140 миллион тенкĕ укçа парать.

Потемкин юлташ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур работниксем умĕнче тăракан задачăсене палăртса панă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕн уйрăмлăхĕ çакă пулать: тулли вăтам тата вăтам шкулсенче пĕрремĕш класран пуçласа 10-мĕш класа çитиччен арçын ачасене хăйсене уйрăм, хĕрачасене хăйсене уйрăм вĕрентессĕ. Арçын ачасемпе хĕрачасене пĕр-пĕринчен уйрăм вĕрентни, Потемкин юлташ каланă пек, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи йывăрлăхсене сирсе ярĕ, шкулта ирĕклĕ дисциплинăна çирĕплетме тата арçын ачасемпе хĕрачасене вĕсен ӳт-пĕвĕн уйрăмлăхĕсене шута илсе практикăллă ĕçе ăнăçлăн хатĕрлеме çĕнĕ майсем туса парĕ.

Потемкин юлташ тата вĕренекенсем хăйсене хăйсем мĕнле тытмалли çинчен калакан правилăсене çирĕплетни çинчен каласа панă. Çакна канашлура пулнисем пурте пĕр шухăшлă пулса ырланă. Çав правилăсене вĕренекенĕн билетĕнче 20 пунктра каласа панă; вăл билетсене хулари шкулăн 5-мĕш класĕнчен пуçласа кашни вĕренекене салатса параççĕ.

Канашлура юлашкинчен РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. Н. Косыгин сăмах тухса каланă. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем умĕнче тăракан задачăсем хушшинче Косыгин юлташ уйрăмах шкул çулне çитнĕ мĕнпур ачасене вĕрентме кирлине, шкулсене квалификациллĕ учительсем çителĕклĕ яма кирлине палăртса панă.

Канашлу резолюци йышăннă, вăл резолюцире совет шкулĕн ĕçĕсене малалла лайăхлатма кирлĕ мерăсене палăртса хунă. (ТАСС).

Колхозсенчи яслисем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Малалла» колхозра июлĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласах ача ясли ĕçлет. Унта пурĕ 70 ача. Ачасене Е. Сергеевăпа А. Петухова юлташсем пăхаççĕ. Яслинче ачасен пурнăçĕ савăнăçлă. Вĕсене вăхăтра апат çитереççĕ, тĕрлĕрен вăйăсем вĕрентеççĕ. Ачасем пурăнакан çурт таса. А. Петухова юлташ ачасене таса тытассишĕн тăрăшать.

Ясли пуррипе колхозницăсем уйра савăнса ĕçлеççĕ, вĕсем яланах ĕç нормисене тултарса пыраççĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Çулпуç приказĕ ĕççынниссене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать

Çĕнтерӳ хĕçпăшалне фабрикăсемпе заводсенчи, колхоз уйхирĕсенчи хĕрӳ ĕçре туптар!

„Çулпуç хĕрӳ ĕçре çĕнтерӳ тупма хушрĕ“

КАНАШ, августăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Августăн 5-мĕшĕнче — çĕршывшăн паллă кун — вагонсем юсакан заводра çĕрлехи сменăсенче ĕçлекенсем радио тăрăх Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн приказне тата Орелпа Белгород хулисене нимĕçсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă совет войскисене Мускав 120 орудирен вуникĕ хутчен пĕр харăс персе саламланине пысăк хавхаланупа итлерĕç.

Юратнă çулпуçăн приказĕ завод коллективĕн производствăллă активлăхне ӳстерчĕ.

Завод ĕнер нихăçанхинчен те пысăкрах çĕкленӳпе ĕçлерĕ. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пур цехсемпе сменăсенче те савăнăçлă митингсем пулса иртрĕç. Сталин юлташăн августăн 5-мĕшĕнчи приказне заводри кашни рабочи ĕç программи вырăнне йышăнчĕ. Нумай стахановецсемпе стахановкăсем, митингра тухса каласа, август уйăхĕнчи программăна—ик-виçĕ хут ирттерсе тултарма сăмах пачĕç.

Завод ĕнерхи программăна 150 процент тултарчĕ. Вагонсем тăвакан цехри пĕр комплекс (начальникĕ Хавалкин юлташ, мастерĕ—цехри парторг Демкин юлташ) графикран ирттерсе икĕ вагон туса кăларчĕ.

— Çулпуç хĕрӳ ĕçре çĕнтерӳ тупма хушрĕ,—терĕ митингра Соколовский юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановец Притаманный юлташ. Вăл хăйĕн сăмахне ĕçпе çирĕплетрĕ. Ĕç пĕтес умĕн цех начальникĕ вăл мĕн чухлĕ ĕçленине шутласа пăхма хушрĕ. 400 процент, — акă унăн ĕнерхи ĕçĕ!

Завод коллективĕ август уйăхĕнче ытти уйăхсенчен лайăхрах ĕçлеме тăрăшать. Вагонсем тăвакан цехри пĕр бригада августăн ултă кунĕ хушшинчех çур уйăхри заданине ирттерсе пурнăçларĕ. Вагонсем юсакан тата вагонсем тăвакан цехри уйрăм бригадăсем çак уйăхри программăна вунă кун маларах—августăн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

И. КОЛОМИЕЦ,
Вагонсем юсакан заводри партбюро секретарĕ.

Чаплă çĕнтерӳпе хавхаланса

КАНАШ. (Хамăр корр., телефонпа). Сталин ячĕпе хисепленсе тăракан артельри рабочисем Сталин юлташăн Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене панă приказне сӳтсе-яврĕç. Рабочисем, Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, хăйсем çине ĕç тухăçлăхне ӳстерме çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. В. Афанасьева, А. Степанова работницăсем иртнĕ уйăхсенче хăйсен ĕç нормине 150 процент тултарса пынă пулсан, август уйăхĕнче 200 процентран кая мар тултарса пыма сăмах пачĕç. Артель август уйăхĕнчи плана 159 процент тултарма сăмах пачĕ.

* * *

ШАХАСАН. Райпромкомбинатра Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа митинг пулса иртрĕ. Митингра 60 çулхи Спиридонов юлташ çапла каларĕ:

— Эпир кашни кунах чĕрене савăнтаракан çĕнĕ хыпарсем илетпĕр. Эпир ĕмĕтленнĕ ĕмĕт инçе мар. Часах тăшмана пĕтĕмĕшпех çапса аркатăпăр. Çакăн пек чаплă çĕнтерӳсем пире тата хастартарах ĕçлеме ыйтаççĕ. Çав ыйтăва чĕререн туйса тăрса, август уйăхĕнчи ĕç нормине 300 процентран кая мар тултарса пыма сăмах паратăп,—терĕ. Çавăн пекех июль уйăхĕнчи ĕç нормине 150—170 процент тултарса ĕçленĕ И. Леонтьев, Гаврилов, Демьянов, Константинов, Герасимов юлташсем август уйăхĕнчи плана 200 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç.

Промкомбинат июль уйăхĕнчи плана 132 процент тултарнă пулсан, август уйăхĕнче 140 процент тултарма пулчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Кĕраки умĕн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 7-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Пирĕн войскăсем нимĕçсене вăйлăн пырса çапса Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă. Хĕрлĕ Çарăн фронтри паттăр ĕçĕ колхозниксене чĕререн савăнтарать, татах та тимлĕрех ĕçлеме вăй парать. Çак савăнăçлă хыпара, Сталин юлташăн войскăсене тав туса панă приказне агитаторсем колхозниксене çийĕнчех ăнлантарса пачĕç.

Комсомолка стахановка Е. Спиридонова юлташ тырă вырма кулленех ирхине 3 сехетре тухать те каç пулсан 11 сехетре тин кĕрет. Çапла кашни кун вăл çурлапа 0,25 гектар тырă вырать, кулленхи нормăна 200 процент ытла тултарать. Çавнашкалах союзра тăман хĕрачасем П. Краснова, Т. Федорова юлташсем те кунне 0,20-шер гектар выраççĕ.

Пĕрремĕш бригадăра Ф. Никифорова юлташ пример кăтартса ĕçлет. Вăл кулленех ĕç нормине 180 процент тултарать. Колхозăн чи ватă çыннисем те çак хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ĕççĕр лармаççĕ. Вĕсем хăйсем уйăрса илнĕ участокра вăй çитнĕ таран ĕçлеççĕ. Акă 80 çула çитнĕ старикемсем М. Тимофеев, С. Петров юлташсем кунне 40-шер тĕм тырă выраççĕ. Колхозра кахалсем те пур. «Иртĕнсе çӳрекенсем», «таркăнсем», теççĕ вĕсем çинчен колхозниксем, тарăхса. Вĕсем—Е. Сергеевпа Шумилов. Иккĕшĕ те çамрăксем.

«Янмурзино» колхоз августăн 6-мĕшĕнче кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕ, тимлесех авăн çапма тытăнчĕ, чи малтан çапса илнĕ таса тырра государствăна леçеççĕ. Паян акă заготзерно пунктне 13 центнер çĕнĕ тырă леçме кайрĕç.

Колхоз йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерсе пырать. Кăçал 198 гектар кĕрхи тырăсем акса хăвармалла. Халĕ кĕрхи тырăсене акма çĕр хатĕрлеççĕ. Çĕртме сухине тепĕр хутчен 20 плугпа сухалаççĕ. Кĕрхи тырăсене пурне те сеялкăсемпе акса хăварма шутлаççĕ. Çавна май халь сеялкăсене тӳрлетсе уя илсе тухрĕç, акмалли нормăсене палăртса хучĕç.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 6-мĕшĕнче БРЯНСК енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла, вăл шутра кăнтăрта КРОМЫ хулине тата çурçĕрте халăх пурăнакан пунктсене — СТУДЕНКА, ГНЕЗДИЛОВО, ЖДИМЕР, БОБРОВКА ятлă пунктсене йышăнса илнĕ.

Августăн 4-мĕшĕнче пирĕн БЕЛГОРОДРАН çурçĕртерехри районра тăракан войскăсем ХАРЬКОВ енче наступлени пуçласа янă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона участокне фронт тăрăх 70 километр тăршшĕнче татса кĕнĕ. Виçĕ кун хушшинчи хаяр çапăçусенче 25 километртан пуçласа 60 километра çити малалла кайнă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла, вăл шутра ЗОЛОЧЕВ хулипе чугунçул станцине, ТОМАРОВКА район центрĕпе чугунçул станцине, КАЗАЧЬЯ ЛОПАНЬ район центрĕпе чугунçул станцине тата КУЛИКОВКА, НОВОБОРИСОВКА, ХОТМЫЖСК, КАЗАЧОК, ОДНОРОБОВКА чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Донбасра, ИЗЮМРАН кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче Мга хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата хĕвелтухăçнерехри районсенче разведчиксем вăйлăн шыраса çӳренĕ тата икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерипе миноментсенчен вăйлăн персе тăнă.

Августăн 5-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 66 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллерирен персе, тăшманăн 114 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Совет войскисем Орел хулине йышăнса илнĕ хыççăн çаплах хĕвеланăçнелле куçса пынă. Тăшман хыçала танксен тата пехотăн йышлă вăйĕсене хăварса хӳтĕленсе, хăйĕн лӳчĕркенсе пĕтнĕ дивизийĕсене пирĕн войскăсем пыра-пыра çапасран ирĕкелле илсе тухма хăтланнă. Тăшмана хăваласа пырса, пирĕн войскăсем нимĕçсене йывăр çухатусем кӳреççĕ. Пĕр соединени боецĕсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче пĕр участокра кăна нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 14 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 18 оруди, 90 пулемет тата 150 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

Орелран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман темиçе контратака тунă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, халăх пурă-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Вăрмарти спортинвентарь фабрикин уйрăмах палăрнă рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçланăшăн Вăрмарти спортинвентарь фабрикин уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Мария Андреевна **Андреевăна** — торцовщицăна.
2. Иван Афанасьевич **Афанасьева** — электромонтера.
3. Михаил Васильевич **Васильева** — столярно-сборочнăй цехăн старши мастерне.
4. Матвей Дмитриевич **Волкова** — металл ĕçлекен токаре.
5. Иван Феофилактович **Горбунова** — фабрика директорне.
6. София Елизаровна **Елизаровăна** — работницăна.
7. Нина Кирилловна **Кирилловăна** — сборочнăй цехăн столярне.
8. Клавдия Кузьминична **Кузьминăна** — работницăна.
9. Клавдия Матвеевна **Матвеевăна** — сборочнăй цехăн столярне.
10. Агафия Михайловна **Михайловăна** — работницăна.
11. Михаил Николаевич **Николаева** — йывăçа механикăлла каскалас ĕçĕн техноруке.
12. Александр Сергеевич **Сергеева** — механическăй цехăн старши мастерне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи августăн 6-мĕшĕ.

Пирĕн авиаци Брянск, Харьков чугунçул узелĕсене, Карачев станцине тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Августăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци 1-мĕш Брянск, 2-мĕш Брянск чугунçул узелĕсене, Харьков чугунçул узелне тата Карачев станцине тапăннă. Тăшманăн войскăсемпе тата техникăпа пыракан эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Чугунçул çинчи темиçе состава çĕмĕрнĕ. Нумай тĕлте пушарсем тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав çĕрех пирĕн авиаци тăшманăн чылай аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав аэродромсем çинче пулнă нимĕç самолечĕсене чылай нумай пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Пирĕн 2 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

накан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 700 вилли тăран выртса юлнă.

Орелран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем Кромы юханшывĕн çурçĕр хĕрринчи плацдармсене анлатасшăн тата юханшыв çинчи каçăсемшĕн вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсем хирĕç тăнă, совет чаçĕсене хирĕç контратакăсем тунă. Çĕрле пирĕн войскăсем тăшмана темиçе енчен те атакăланă та хаяр çапăçу хыççăн Кромы хулине йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Кÿршĕри участокра кĕрешекен пĕр соединени малалла ăнăçлăн куçса пырса, нимĕçсен икĕ батальон пехотине, 6 танкне тата темиçе вуннă автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 4 танк, 11 оруди тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци Орелран хĕвеланăçнерехри çулсем çинче пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман пехоти, автомашинисем тата техники çине кăнтăрла та çĕрле те бомбăсем пăрахнă, штурмланă. Сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 53 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Харьков енче пирĕн войскăсем, ăнăçлăн малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра Золочев хулине, Томаровка тата Казачья Лопань район центрĕсене йышăнса илнĕ. Советсен танковăй подразделенийĕсем темиçе чугунçул станцине йышăннă, тăшманăн паха магистральне тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса пырса, нимĕçсен 2000 салтакĕпе офицерне çити, 26 танк, 39 оруди, 22 миномет тата 88 пулемет пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 8 танк, 17 оруди, 1500 ытла винтовкăпа автомат, боеприпассен 5 складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Пĕр стрелковăй часть кăна нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçа тăшманăн 36 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, çаплах разведчиксем шыраса çÿренĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, пирĕн подразделенисем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, вĕсем çав вырăнта чи çÿллĕ темиçе высотана йышăнса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсен пĕр батальон ытла пехотипе 8 танкĕ контратака тунă. Пĕр чаçри артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Танксем хÿтĕлени пĕтсе ларнине пула нимĕç пехотин йывăр çухатусем тÿсме лекнĕ, вара вăл малтанхи позицисем çине каялла чакса кайнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери персе тăшманăн 34 дзотне ишсе антарнă, нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 5 батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 6 складне çĕмĕрнĕ. Пирĕн подразделенисем нимĕç пехотине пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Карели фронтĕнче нимĕçсен разведка тăвакан отрячĕ пирĕн линин малти хĕрри патне сывхарма хăтланнă. Подразделенири боецсем, Дегтярев лейтенант командир пулса ертсе пынипе, засада тунă та, нимĕçсене сывăхах пыма панă, вара пăшалпа тата пулеметпа пеме пуçланă.

Çак ĕç кĕтмен çĕртен сиксе тухнипе, гитлеровецсем хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахсах тарма тытăннă. Пирĕн боецсем, нимĕçсене хăваласа, çав разведка отрядне йăлтах пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет летчикĕсем Хура тинĕсре тăшманăн 2000 тонна водоизмещениллĕ транспортне, десант антармалли 2 баржине тата хуралта çÿрекен катерне шыва путарнă.

* * *

Станислав облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем июль уйăхĕн вăрринче нимĕç захватчикĕсене чылай хутчен вăйлăн пыра-пыра çапнă. Совет патриочĕсем боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, 600 тонна горючи çунтарса янă тата нефть тапакан темиçе вышкăна, нефть тасатакан 2 завода тата нефтĕн насослă станцине юрăхсăра кăларнă. Унсăр пуçне тата партизансем чугунçулпа шоссе çинче 23 кĕпере сирпĕнтернĕ е çунтарса янă. Нимĕçсем партизансене хирĕç пысăк çар чаçĕсем янă. Хаяр çапăçусенче Станислав партизанĕсем нимĕçсен 700 фашистла захватчикне çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем пысăк трофейăсем тытса илнĕ.

Кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене вăраха ямалла мар!

Ĕçре малта пынипе агитацилеççĕ

ЕТĔРНЕ. Анат-Кассинчи «Борец» колхозри агитаторсем Ольгăпа Нина Чамкаева, Анна Орлова, Валерий Светлов юлташсем колхозниксемпе пĕрле хирте ĕçлеççĕ, тухăçлăн ĕçлесе, ытти колхозниксене ĕçре хавхалантарса пыраççĕ. Вĕсем кунне 300—400 кĕлте ытла выраççĕ. Ирхинепе кăнтăрла тата кĕске кану вăхăтĕнче колхозниксене хаçатсем çинчи хыпарсене пĕлтереççĕ. Вĕсем Совет Информаци Бюровĕн оперативнăй сводкисене ирхине хăйсем телефон тăрăх итлесе çырса пыраççĕ, колхозниксене хире пуxсанах ăнлантарса параççĕ.

Кунти агитаторсем агитациллĕ-массăллă ĕçсене йăлтах СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулхи тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленипе çыхăнтарса туса пыраççĕ.

Стена хаçачĕн ответлă редакторĕ—Етĕрне педучилищинче вĕренекен Петр Степанов икĕ кунта пĕр номер хаçат кăларса тăрать. Тырă вырма тухнăранпа виçĕ номер стена хаçачĕ тухрĕ. Хаçат ĕçри çитменлĕхсемпе паха енсене анлăн çутатса тăрать. Хаçатсене тырă вырнă çĕре илсе туха вуласа кăтартаççĕ.

С. ЮШКОВ.
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Уборка ĕçĕсенче çирĕп дисциплинăллă пулни кирлĕ

ЭЛĔК, августăн 5-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Юлашки вăхăтра, çанталăк лайăхланнă май, тырă вырса пухас, авăн çапса государствăна тырă парас ĕçсем чылай хăвăртланчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ приказне колхозсен аслă уйхирĕсенче çĕнĕ ÿсĕмсем туса ответлеççĕ. Вăрманкас Тавăшри Сталин ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕ, халĕ пĕтĕм вăя çурхи тырăсем вырас, авăн çапас ĕçе хурать. Ĕнерхи кун 15 гектар сĕлĕ тата урпа вырса пухрĕç. Пĕтĕм халăх уйра. Нормăна кулленех тултарса ĕçлеймен колхозниксем кунта пачах çук.

Колхоза София Ястран юлташ ертсе пырать. Унăн упăшки М. Ястран Сталинградшăн пынă геройла çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Йывăр хуйăха София Ястран ĕçре пусарчĕ. Вăл колхозăн анлă ĕçĕсене пултаруллăн ертсе пырать, хăйĕн пĕтĕм вăйне ĕçе парать.

Патакассинчи «Броневик» тата ытти чылай колхозсем паян ырапх вырса пĕтереççĕ. Анчах уйрăм колхозсенче тырă вырас ĕç халĕ те çителĕклĕ хăвăртлăхсемпе пымасть-ха. Ку вăл уйрăмах ĕç дисциплинине япăхлантарса янă колхозсенче палăрать. Элĕкри «Броневик» колхозăн кĕрхи тырăсем 97 гектар, анчах халĕ 10 гектар ытларах çеç вырнă. Паян та, акă, тырă вырма 9 сехетре çеç тухрĕç. Хăшпĕр колхозниксем кулленех ĕçрен пăрăнса çÿреççĕ.

Анаткасри Калинин ячĕпе тăракан, Писеперти «9-й съезд ВЛКСМ» колхозсем те халĕ кĕрхи тырăсене 30—40 процент çеç вырнă. Калинин ячĕпе тăракан колхоэра 3 жнейка ахалех лараççĕ. Колхозра столовăй, ача яслийĕ çуман.

Августăн 4-мĕшĕ тĕлне районри колхозсенче пурĕ 4 016 гектар тырă вырнă, вăл шутра жнейкăсемпе вырни мĕнпурĕ те 791 гектар çеç.

Х. ЛИСИН.

Махорка çум ăшне пулнă

Красноармейски районри „Победа“ колхоз кăçал 7 гектар çурă махорка лартнă. Лартнă та манса кайнă, махорка хăйне хăех аван ÿсесси çине шаннă. Махорка плантацийĕнче ĕçлеме 19 колхозникрен бригада та тунă, анчах ку вăл хут çинче кăна паларса тăрать. Махорка енĕпе ĕçлеме уйăрнă çынсене пĕрмаях ытти ĕçсенче тытаççĕ. Махоркăна кăçал çумкурăксенчен пачах тасатман. Талккишĕпех çумкурăкĕсем ешĕреççĕ плантацире. Мĕн чухлĕ силос хывмалли курăк сая каять, махорка та ÿсеймест.

Халĕ махоркăна тăррине татас ĕç пымалла, анчах кăна та тума тытăнман. Тислĕк хурса çемçетнĕ çĕрĕн сĕткенĕ усăсăр сая каять. Пĕр енчен çумкурăкĕсем пусарса илнипе, тепĕр енчен ăна усăсăр чечекрен вăхăтра хăтарманнипе махоркăн тунисем шĕвĕрĕлсе çитнĕ, çулçисем сарăлса çитмесĕрех сарăхса пĕтĕрĕнме пуçланă.

Колхозăн уйхир ĕçĕсене тăвакан бригадăсенче çынсем çителĕклĕ пулин те, июлĕн 30-мĕшĕнче махорка плантацийĕнче ĕçлеме уйăрнă колхозниксем кунĕлех итем касрĕç. Çав вăхăтрах ытти бригадăсенчи чылай колхозниксем килтех ларчĕç.

Колхоз председателĕ Кузьмин юлташ махорка ÿстерес ĕçе хакламанни курăнать. Иртнĕ çулта та „Большевик“ колхозăн махорка гектартан 5 центнер çеç тухнă, кăçал та махоркăна тухăçлăн ÿстерессишĕн тăрăшни курăнмасть.

С. ШАДИН.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ТАТА ÇУРХИ ТЫРĂСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ АВГУСТĂН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырнă (процентпа)
Вăрмар	44,2
Куславкка	42,5
Елчĕк	40,6
Тăвай	40,2
Сĕнтĕрвăрри	38,1
Октябрьски	34,7
Етĕрне	34,7
Советски	34,3
Шăмăршă	33,4
Комсомольски	33,1
Хĕрлĕ Чутай	32,2
Вăрнар	31,6
Иншей	31,3
Чкаловски	31,3
Сĕнтĕр	29,6
Калинино	29,4
Шупашкар	29,4
Çĕрпÿ	27,8
Канаш	25,1
Элĕк	25,0
Шăхасан	24,9
Красноармейски	23,3
Улатăр	22,5
Йĕпреç	21,2
Çĕмĕрле	18,6
Пăрачкав	18,2
Первомайски	16,1
Кувакино	11,9
Шупашкар хули	32,0
ЧАССР тăрăх	30,1
Августăн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	15,6

Çулталăк планне 3-мĕш кварталта пурнăçласшăн

КУСЛАВККА. (Телефонпа). «Прогресс» артель (правлени председателĕ Нарков юлташ) июль уйăхĕнчи производство планне 20 кун хушшинче 137 процент пурнăçланă. Июлĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа вăл планран ирттерсе ĕçлет. Ку ĕçре артеле икĕ сменăпа ĕçлемелле туни нумай пулăшрĕ. Иртнĕ уйăхсенче çĕлемелли машина çителĕклĕ пулман пирки, тухăçлăн ĕçлеме май пулман. Çавна пула илсе, халĕ артель икĕ сменăпа ĕçлеме пуçларĕ. Ĕçе çакăн пек йĕркелени ĕç тухăçлăхне нумай хăпартрĕ. Ĕçре уйрăмах А. Маркина, Н. Казакова, Е. Моисеева работницăсем палăрса тăраççĕ. Вĕсем задание кулленех 180—200 процент тултараççĕ.

Артель коллективĕ çулталăкри производство планне сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулать. Илнĕ обязательствăна пурнăçлас тесе рабочисемпе работницăсем ăмăртăва вăйлăн сарса ячĕç.

И. ШАРКОВ.

Çамрăксен фронтовой бригадисем

Пĕр заводри комсомол комитечĕ пĕр цехри Башмачникована Филиппова комсомолкăсене çамрăксен фронтовой бригади организацилеме хушнă. Çамрăк хĕрачасем çак ĕçе тума хавасăн килĕшнĕ.

Башмачникова ертсе пыракан çамрăксен фронтовой бригади малтанхи кунранах паха тĕслĕхсем кăтартать. Бригадăри çамрăксем производствăра вăхăта шутламасăр ĕçлеççĕ.

Комсомолка Башмачникова юлташ завода вăрçăн малтанхи кунĕсенчех ĕçлеме кĕнĕ. Вăрçăччен вăл Мускаври пĕр институтра вĕреннĕ. Чи малтанах вăл заводра фрезеровщица пулса ĕçленĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех ĕçĕн майне вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл уйăхри задание 200—300 процент тултарса пырать.

Унăн юлташĕ комсомолка Маруся Филиппова та заводра пĕр çулталăк ĕнтĕ ĕçлет. Вăл та ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕ. Çак икĕ çамрăк хĕрачан-комсомолкăсен бригадисем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Пĕр-пĕрне яланах пулăшса, кăтартусем парса пыраççĕ. Июнь уйăхĕнче икĕ бригадă та производство планне 250—270 процент пурнăçларĕç. Башмачникова юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Завод июнь уйăхĕнче те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш премине илчĕ. Çак пысăк награда çине фронтовой бригада татах та тухăçлăнрах ĕçленипе ответлет.

— Фронтра çĕршывшăн вăйхала хĕрхенмесĕр ĕçлетпĕр,—теççĕ бригадăри çамрăксем.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

Извещени иличченех тÿлесе татрĕç

КАНАШ. Вăтакас Татмăш ялсоветне кĕрекен Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 1943 çулхи ялхуçалăх налогне извещени иличченех тÿлесе татма тăрăшаççĕ. Данилов Николайăн пĕр ывăлĕпе хĕрĕ фронтра. Вăл извещени иличченех 1296 тенкĕ тÿлерĕ. Ун хыççăн Яковлев, Ф. Михайлова, В. Яранскова, Т. Ильин, И. Павлов тăвата фронтовик ашшĕ т. ыт. те тÿлесе татрĕç. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Н. Тимофеев та извещени иличченех тÿлерĕ.

Ялхуçалăх налогне тÿлесси «Динамо» колхозра та ăнăçлăн пырать. М. Димитриева, Е. Миронова ялхуçалăх налогне извещени илсенех парса татрĕç.

Т. ТУРХАН.

ФЗО шкулĕн пĕр уйăх хушшинчи ĕçĕсем

Пурнăç вĕресе тăрать кунта. Пулас çамрăк рабочисем хăйсен малашнехи ĕçĕсем çинчен, паян мĕнле ĕçлени тата ыранхи плансем çинчен калаçаççĕ. Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнче вĕренекен çамрăксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк.

Кăçалхи пĕрремĕш çурçулра 150 çамрăк фронт валли кирлĕ япаласем туса кăларас енĕпе тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем ФЗО шкулĕнчен кирлĕ специальноçсем илсе вĕренсе тухнă, халĕ кадровăй рабочисем пулса ĕçлеççĕ. Нумайĕшĕ вĕсенчен нормăна 150—200 процент тултарса пыраççĕ.

Халĕ шкула çĕнĕ çамрăксем килчĕç. Вĕсем пурте производство ĕçне юратса вĕренеççĕ. 3—4 уйăх хушши вĕренсе хăйсене кирлĕ специальноçсем илнĕ вăхăтрах, çамрăксем 192.929 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, ку вăл планпа пăхнинчен 54,3 процент ытларах пулать.

Çак çулхи июнь уйăхĕнче 104 вĕренекен 115.415 тенкĕлĕх продукци туса кăларса, плана 192,3 процент тултарнă. Çав вăхăтра вĕсем 13.524 тенкĕ ĕçукçи ĕçлесе илнĕ. Маттур ĕçлекен комсомолецсем сахал мар кунта. Комсомолец С. Петров слесарьсен группинче вĕренет. Вăл июнь уйăхĕнче производствăри нормăна 130 процент тултарнă. А. Александрова комсомолка та вĕреннĕ вăхăтрах нормăна 125 процент туларса, 515 тенкĕ ĕçукçи илнĕ. Çавăн пекех прессовщиксен группинче вĕренекен Е. Играевская юлташ та июль уйăхĕнче 552 тенкĕ ĕçлесе илнĕ, вăл нормăна 117 процент тултарать. Кун пек тĕслĕхсем татах та пур. Ку вăл—социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янин результачĕ. Ун çинчен çакă та лайăх кăтартса парать: мĕнпур вĕренекенсенчен производство ĕçне «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренекенсен шучĕ 63,5 процент шутланать. «Плохо» паллăсем илекенсем çук. Ачасене лайăх вĕрентес, производствăна хăнăхтарас тĕлĕшпе шкул директорĕ Власов юлташ тата мастерсем тăрăшса ĕçлесе пыраççĕ. Пуринчен ытла ачасем Макар Романович Стоян мастера хисеплеççĕ. Вăл коммунист, хăйĕн ăста пĕлÿлĕхне яланах ачасене пама тăрăшать. Çавăн пекех старши мастер Кириченко юлташ та ĕçре лайăх ертсе пырать.

Шкулта вĕренекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕç аван пулса пырать. Комсомол комитечĕн секретарĕ Серякова яланах ачасемпе пĕрле пулса вĕсене хаçат-журнал вуласа парать, фронтри лару-тăрусем çинчен, унти геройсем çинчен каласа парать, стена хаçачĕ кăларать, комсомол пурнăçĕпе паллаштарать, çамрăксене комсомол ретне явăçтарас енĕпе ĕçлет.

Анчах та шкул пурнăçĕнче çитменлĕхсемпе чăрмавсем те пур-ха. Кунта халĕ 150 ача вырăнне 104 ача çеç вĕренеççĕ. Сĕнтĕр райисполкомĕ çамрăк кадрсем хатĕрлес ĕç çине сÿрĕккĕн пăхнине пула, паянччченех 20 çынна вĕренме ямасть. Çавăн пекех Канаш райисполкомĕ те 30 çын ярса паман. Çав ачасен вырăнĕсем шкулта пушă лараççĕ.

Шкулта физкультурăпа çар ĕçне тата политмассăллă ĕçе татах та вăйлăлатни кирлĕ. Комсомол ретне куллен йышлăлатса, ăна çирĕплетсе пымалла.

Н. ФОМИН,
ЧАССР Ĕç резервĕсен управлени начальникĕн заместителĕ.

Ют çĕршывсенче

„Вырăс çарĕсен Сталинград патĕнче пулнă çапăçу хыççăнхи чи аслă çĕнтерĕвĕ“

Англи хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар Орелпа Белгорода йышăнни çинчен

ЛОНДОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Орелпа Белгорода йышăнса илнĕ совет çарĕсен çĕнĕ çĕнтерĕвĕ çинчен калакан хыпарсене пур хаçатсем те пысăк заголовоксем парса пичетлесе кăларнă. Ку çĕнтерÿ çинчен хаçатсем анлăн ăнлантарса параççĕ.

Англин информаци министерстви каланă тăрăх, Лондонри çар сыннисем çапла шутлаççĕ: совет çарĕсем Орела туртса илсе, икĕ çула яхăн нимĕçсен аллинче пулнă пысăк базăна йышăнчĕç. Шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен ку çĕнтерÿ акă мĕн пирки питĕ паха—ку пысăк çитĕнĕве вырăс çарĕсем çуллахи вăхăтра турĕç.

Рейтер агентствин обозревателĕ Фергюсон çапла çырать: Орела йышăнса илни вăл—вырăссем çак вăрçăра тунă чи пысăк çитĕнÿсенчен пĕри пулса тăрать. Нимĕç çарĕсене вĕсем тума пултарнă чи вăйлă çирĕплетнĕ позицисем çинче çапса аркатнă. Июлĕн 5-мĕшĕнче нимĕçсем вырăс çарĕсене арпаштарса ярас тесе пĕтĕм халран çапăçма тытăннă. Анчах та вырăссем нимĕçсен «савăлсем» туса çапăçмалли меслетне хирĕç кĕрешме вĕренсе çитрĕç. Вĕсем хăйсем хирĕçле наступлени пуçласа ячĕç.

Çавăн пекех Рейтер агентствин вăрçă ĕçĕсене пăхса тăраканĕ Губерт Гоф генерал та çакна паллă тăвать: Орела йышăнса илни вырăс çарĕсен Сталинград патĕнче пулнă çапăçу хыççăнхи аслă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать, тет. Орела йышăнса илес тĕлĕшпе туса ирттернĕ операцире,—тесе çырать Гоф,—вырăс командованийĕн паха енĕсем палăрчĕç. Вырăс командованийĕ хăй суйласа илнĕ çапăçу хирне темĕн чухлĕ çар, артиллери тата авиаци пĕр çĕре пуçтарса тăратма пултарнă, вара пĕр пуçласа янă операцие питĕ çине тăрса туса ирттернĕ.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: вырăссен çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем нимĕçсен Российăри планĕсене питĕ вăйлăн пăсса пăрахрĕç, тет.

«Таймс» хаçат çапла çырать: вырăссем Орел патĕнче тунă çĕнтерÿсем гитлерла Германин кунçулĕ пĕтсе пынине пуринчен те лайăхрах кăтартса параççĕ. Гитлерла Германин кунçулĕ кĕскелсе çитни вăл пуринчен те ытларах вырăссем хаяррăн кĕрешнипе пулса пырать. Вырăссен çĕнĕ çĕнтерĕвĕ,—тет хаçат,—нимĕçсем çулла çĕнтерсе пыраç тесе нимĕçсем хăйсем туртса кăларнă халлапа пĕтерсе лартрĕ. Халĕ,—тет хаçат малалла,—нимĕçсен çитес хĕле тата ытларах хăраса кĕтсе илме тивет, мĕншĕн тесен хĕлле вырăссем пур енĕпе те нимĕçсенчен вăйларах.

«Дейли мейл» хаçат шутланă тăрăх, вырăссем Орела йышăнса илни вăл—вырăссен çак вăрçăри питĕ чаплă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Вăл çĕнтерÿ нимĕçсен шухăш-кăмăлĕсене тĕпренех пусарса лартмалла, мĕншĕн тесен нимĕçсем Орел оборонине Германин çар вăйхăвачĕн тĕрекне кăтартса тăракан паллă тесе шутланă.

ИТАЛИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Хаçатсем çырса пĕлтернĕ тăрăх, Италири лару-тăру кунсеренех çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать. Миланра çуртсен стенисем çинче çакăн пек çырнă сăмахсем тĕл пулма пулать: «Нимĕçсене Италирен сирпĕнтерĕр!», «Пире мир кирлĕ!»

Çурçĕрти Италире халăха йышлăн тыта-тыта хупаççĕ.

Бадольона хирĕç пыракан оппозици пĕтĕм çĕршывĕпе сарăлса пырать. Хуласенче вăрттăн листовкăсем сарса çÿреççĕ. Ку листовкăсенче политикăллă пилĕк парти Бадольона, вăл нимĕçсем майлă пулнипе вăрçа пĕтересшĕн мар, тесе айăплаççĕ.

Миланри мĕнпур пысăк предприятисенче вăрçа чарма ыйтса çур сехетлĕх забастовкăсем туса ирттернĕ. Рабочисем 30 минут хушши ĕçе пăрахса аллисене кăкăр çине хĕреслетсе хурса ларнă. Çавăн пек аллисене хĕреслетсе ларнă забастовкăсем çĕршыври мĕнпур пысăк заводсенче те пулса иртнĕ. Миланра, Генуйăра тата промышленноçлă ытти центрсенче те забастовка тăвакан рабочисем, полицейскисем чарнине пăхса тăмасăр, пинĕ-пинĕпе площадьсене тухса демонстрацисем тунă, вăрçа чарса лартма ыйтнă. Генуйăра карабинерсем хĕçпе çапăçма пуçланă, демонстраци тăвакан рабочисене темиçе çĕр çынна амантнă, нумайĕшне тытса хупнă. Генуя çывăхĕнче полицейскисемпе демонстрацири халăх пĕр-пĕрин çине пăшалпа пенĕ.

Забастовкăсем тунине пула Италири мĕнпур авиаци завочĕсенче те продукци кăларасси чакнă. (ТАСС).

БАЛКАНРА НИМĔÇСЕМ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН САМОЛЕЧĔСЕНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Балканра хăшпĕр районсенче нимĕçсем итальянецсен самолечĕсене вăйпа тытса илнĕ. Пур машинăсем çинче те итальянецсен паллисене хуратнă та нимĕçсен паллисене туса лартнă.

Швеци урлă çÿресси çинчен Швецине Германи тунă килĕшÿ

СТОКГОЛЬМ, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: «Швецине Германи правительствисем çакăн çинчен калаçса татăлнă: Швеци урлă отпускниксене тата çар материалĕсене çÿретессине август уйăхĕнчен пуçласа чарса лартмалла».

Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, çак транзита чарса лартасси çинчен Германипе тунă килĕшÿ яланхи пассажирсемпе ахаль таварсене куçарма чармасть. Çавăнпа та транзит тĕлĕшпе виза илнĕ нимĕçсем ку таранччченхи йĕркепех Швеци поевчĕсемпе çÿреме пултараççĕ, çавăн пекех тата ахаль грузсемпе почтăна та Швеци чугунçулĕсемпе Швеци урлă каçарса яма юрать.

Совет Союзне пулăшу парса тăракан Америкăри комитетăн ĕçĕсем

НЬЮ-ЙОРК, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзне вăрçăра пулăшу парса тăракан комитет пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿре çапла каланă: 1943 çулхи малтанхи çурçулта комитет аллине укçан тата япаласем парса пухăннă взноссем мĕнпурĕ 5 миллион та 600 пин долларлăх кĕнĕ. Çав укçатенкĕпе йăлтах тĕрлĕрен япаласем илнĕ, вăл шута медицинăна хирурги валли кирлĕ япаласем те кĕреççĕ. Комитет Совет Союзне мĕнпурĕ 6 миллион долларлăх ытла тĕрлĕ тавар янă.

БЕЛЬГИРИ НИМĔÇ САЛТАКĔСЕМ ХУШШИНЧИ ХУМХАНУСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бельгире нимĕçсен оккупациллĕ чаçĕсенче хумханусем пулса иртнĕ. Арлон хулинче нимĕç салтакĕсем офицерсене юри честь паман. Çакăнтан пуçланса йĕркесĕрлĕхсем тытăнса кайнă. Çав йĕркесĕрлĕхсем вăхăтĕнче 5 çынна вĕлернĕ, 25 çынна амантнă. Вара тепĕр кунне 20 салтака персе пăрахнă.

Çакăн пекех тата Тонгрен хулинчи нимĕç казармисенче те салтаксем хушшинче хумханусем пулса иртнĕ.

Пĕлтерÿ

Августăн 9-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская, 6) агитколлективсен руководителĕсемпе докладчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми: «Авиаци пĕтĕм Союзри кунĕ».

Докладчик—Родин юлташ.

ВКП(б) Горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

НКЭП-ăн ГОРЬКИРИ ЭЛЕКТРОТЕХНИКА ТЕХНИКУМĔН КАÇХИ ФИЛИАЛĔ 1-мĕш 2-мĕш тата 3-мĕш курса вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумра вĕренекенсем ĕçлеме пăрахмаççĕ, хальхи вырăнтах юлаççĕ. Техникумран вĕренсе тухсан, техник-технологсем тата техник-электриксем пулаççĕ.

Техникума кĕрес текенсене миçе çултине тиркемеççĕ. Пĕлÿ тĕлĕшĕнчен вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнче вĕреннĕ чухлĕ пĕлмелле.

Вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен 1941, 1942 тата 1943-мĕш çулсенче «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене техникума экзаменсăрах илеççĕ.

Вăтам шкулăн 9-мĕш тата 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса илеççĕ.

Техникумра экзамен тытмалли предметсемпе консультаци пулать.

Вĕреннĕшĕн çулталăкне 75 тенкĕ тÿлемелле.

Заявленисене 18—20 сехет хушшинче çак кунсенче илеççĕ: тунтикун, ытларикун, кĕçнерникун, эрнекун.

Техникум филиалĕн адресĕ çапла: Шупашкар хули, Ярославски урам, 54 (4-мĕш № шкул çуртĕ).

Чăвашсен ялхуçалăх институтне ботаника кафедри валли ЛАБОРАНТ кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 34.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1799 промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.